28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 18 ВЫРСАРНИКУН 224 (6975) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

## КУЧУХНЕХИ ЧИ ПУРНĂÇЛĂ ТА ХĂВАТЛĂ ЮХĂМ

Социализмлă ăмăрту, вăл тăтăшах ÿссе пыни, унта миллионшар рабочисемпе колхозниксем хутшăнни пирĕн аслă совет демократийĕн уйрăмлăхĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çакă ĕнтĕ вăл чăннипех пĕтĕм халăхăн юхăмĕ, вăл пирĕн государствăри граждансен социализмлă ăстăнлăхне вĕсем Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн тăрăшнине кăтартса парать. Вăл халăхăн сарлака массисем государствăна тытса пырас ĕçе, ăна экономика тĕлĕшĕнчен аталантарас ĕçе, унăн пуянлăхĕпе хăватлăхне вăйлатас ĕçе куллен-кун хушăнса пынине кăтартса парать.

Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Молотов юлташ фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче, шахтăсемпе чугун çулсем çинче социализмлă ăмăрту вăйлăланса пыни çинчен каласа çакна палăртрĕ: «Çакăнта ĕнтĕ халăхăн чăнчăн демократийĕ аталанни курăнса тăрать. Çавăн пек аталанăва эпир ĕлĕкхи саманара пĕлмен, çавăн пек аталану пусмăрлакансемпе пусмăрланакансем çине пайланса тăракан пĕр государствăра та пулма пултараймасть. Çавăн пек сийсем çине уйрăлса тăрассине пирĕн çĕршывра Совет влаçĕ тахçанах пĕтерсе хунă».

Социализмлă ăмăрту тата унăн чи аслă форми—стахановла юхăм — Совет çĕршывĕ нимĕç фашисчĕсемпе Япони империалисчĕсене çĕнтерес ĕçре чăннипех çав тери пысăк историллĕ вырăн йышăнса тăчĕ. Массăсен вăрçăччен социализмлă ăмăртăвĕ пирĕн çĕршыва вăйлă та чее тăшман вăрă-хурахла тапăннине хирĕç тăма пултаракан индустриллĕ-колхозлă хăватлă держава туса хума пулăшрĕ пулсан, вăрçă вăхăтĕнче вара вăл пирĕн çар экономикине хăватлăн аталантарса яма май пачĕ. Фронтшăн, çĕнтерÿшĕн паттăррăн тăрăшнă рабочи класс социализмлă ăмăртăва яланах питĕ пысăк вырăна хунă. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, колхоз хресченĕсем ĕçре çав тери пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çав çитĕнÿсем ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарпа халăха апат-çимĕç парса тăрас ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерме май пачĕç.

Стахановла юхăмпа рабочи класăн творчествăллă ĕçĕ вăрçă вăхăтĕнче ĕçе лайăхрах организацилемелли паха çĕнĕ формăсем туса пачĕ. Пирĕн рабочи класс культурăпа техника тĕлĕшĕнчен çав тери çÿлти пусăмра пулман пулсан, совет промышленноçĕ пирĕн çар валли, тăшман çарĕсеннинчен лайăхрах тата хисепĕ тĕлĕшĕнчен ытларах хĕçпăшал туса пама пултарайман пулĕччĕ. Пирĕн рабочи класăн культурăпа техника тĕлĕшĕнчи ÿсĕмĕ вунă çул каярах малтанхи стахановецсен мухтавлă ĕçĕсене пула вăйлăн аталанса пыма тытăнчĕ.

Сталин юлташ: стахановецсен хисепĕ тăтăшах çитĕнсе пырĕ, тесе генилле малтанах пĕлсе калани пурнăçа кĕчĕ. Стахановла юхăма аслă Сталин «кучухнехи чи пурнăçлă тата никам чарайми юхăм пулса тăрать», тесе ят панă. Вунă çул каярах, 1935 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче, Сталин юлташ стахановецсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш канашлăвĕнче каланă сăмах халĕ пĕтĕмпех тÿрре тухрĕ.

Стахановла юхăмăн никĕсĕнче çĕршыва индустриализацилени, халăх хуçалăхне çĕнĕ база çинче урăхлатса çĕнетни, рабочи класăн культурăпа техника тĕлĕшĕнчи вырăнĕ ÿссе пыни пулнă.

«Пирĕн революци капитализм сăнчăрĕсене татса пăрахнă тата халăха ирĕклĕх панă революци çеç мар, тата вăл халăха пуян пурнăçма материальнăй условисем туса панă пĕртен-пĕр революци пулса тăрать. Пирĕн революцин çак хăвачĕ тата ăна никам çĕнтерейменни çакăнта ĕнтĕ», — тенĕ Сталин юлташ стахановла юхăм пуçланса кайнин тата хăвăрттăн сарăлса пынин сăлтавĕсем çинчен ăнлантарса панă май. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче çакăн пек каланин тĕрĕслĕхĕ пĕтĕмпех тÿрре тухрĕ. Рабочи класпа колхоз хресченĕсен патриотизмĕпе паттăрла ĕçĕсем, вĕсем ĕçре çав тери пуçарулла пулни пирĕн халăх Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтерсе илнисене хÿтĕлеме яланах хатĕр пулнинчен тухса тăрать. Советлă Социализмлă строй вăхăтĕнче çеç пирĕн халăх пуян та культурăллă пурнăç тума пултарчĕ.

Халĕ, вăрçă пирĕн çĕнтерÿпе пĕтнĕ хыççăн, массăсен ĕçри çĕкленĕвĕ совет халăхне çав тери пысăк шанчăк парса тăрать. Çĕнтерÿ пирĕн çĕршывăн хăватлă пуласлăхне аталанма нумай майсем туса пачĕ. Совет çыннисен хальхи ăрăвĕ чи аслă строительствăна хутшăнса ĕçлĕ, çавнашкал строительство историре ку таранччен пулман-ха. Совет Союзĕ çĕнĕ çĕкленÿ умĕнче тăрать. Çакă ĕнтĕ пирĕн халăх пурнăç условине чылай лайăхлатмалла.

Ыранхи çине çакăн пек шанчăкпа пăхни стахановла юхăма çĕнĕрен аталантарса яма çĕнĕ условисем туса парать. Большевиксен партийĕ пирĕн халăха ĕçе мухтавлăх та хăюлăх ĕçĕ çине пăхнă пек пăхма воспитани парса вĕрентрĕ, вăрçă вăхăтĕнче пирĕн техника вăйлă аталанса малалла кайрĕ. Совет çыннисен хăватлă хавхаланăвĕ пĕтĕм халăх хуçалăхне çĕнĕрен аталантарас тĕлĕшпе тăракан пысăк задачăсене ăнăçлăн татса пама пулăшса пырĕ.

Вунă çул каярах Сталин юлташ стахановецсене каланă хăйĕн сăмахĕнче социализм тăшманĕсем элекле сăмахсем сарнин икĕ тĕслĕхне аса илтерчĕ. Тăшмансем сарнă унчухнехи элексене халĕ ют çĕршывсенчи реакциллĕ хăшпĕр деятельсем тепĕр хут çут тĕнчене туртса кăлараççĕ. Вĕсенчен пĕри — социализм вăл çынсене чухăн пурнăç бази çинче танлаштарса пынине пĕлтерет иккен.

«Чăннипе илсен,—тенĕ Сталин юлташ, — социализм пысăк ĕç тухăçлăхĕн капитализм чухнехинчен нумай пысăкрах ĕç тухăçлăхĕн никĕсĕ çинче кăна, продуктсем тата куллен кирлĕ тĕрлĕ йышши япаласем ытлăн-çитлĕнех пулнин никĕсĕ çинче, обществăн пур членĕсем те пуян та культурăллă пурăннин никĕсĕ çинче кăна çĕнтерме пултарать».

Продуктсем тата куллен кирлĕ ытти япаласем ытлăн-çитлĕн пуласси—пирĕн çĕршывăн пуласлăхĕнче уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн рабочи класс, хресченсем, интеллигентсем халĕ çав тери хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕ пирĕн государствăна малалла татах та ытларах чечеклентерессине, халăхăн пурнăç условине лайăхлатса пырассине пĕлсе тăраççĕ.

Тепĕр йышши элекçĕсем пирĕн социализмлă строй çинчен çапла сăмах сараççĕ: ăс-тăнпа физически ĕç хушшинчи уйрăмлăха пĕтерни ăс-тăнпа ĕçлекен рабочисен «ÿсĕмне» чакарса çынсене пĕртан тăвать, теççĕ. Çакă тĕрĕс мар, вăл коммунизм çинчен элек сарни пулать! Пирĕн общество стахановла юхăм никĕсĕ çинче çав уйрăмлăха пĕтерсе пырать. «Чăннипе илсен,—тенĕ Сталин юлташ,— рабочи класăн культурăллă-техникăллă шайне инженерсемпе техниксен шайĕ таран çĕкленĕ никĕс çинче çеç ăс-тăн ĕçĕпе физически ĕç хушшинчи уйрăмлăха пĕтерме пулать».

Пирĕн çĕршыв культурăна çĕнĕрен чечеклентерес, халăха çутта кăларас ĕçе ÿстерсе пырас, рабочисемпе колхозниксен культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерес çулпа пырать. Пирĕн интеллигентсем, пирĕн ученăйсемпе изобретательсем, техниксем пĕтĕм халăхăн культура тĕлĕшĕнчи шайне тăтăшах ÿстерсе пыма тăрăшаççĕ. Партипе комсомол, профсоюз организацийĕсем те çавăн пекех тума тăрăшаççĕ. Хамăрăн мирлĕ ĕçре эпир малта пыракан наукăпа техникăна алла илме тăрăшатпăр.

Мирлĕ вăхăтра совет халăхĕ умне партипе правительство кăларса тăратнă задачăсене татса парас ĕçре, Молотов юлташ хăйĕн сăмахĕнче «хамăрăн çĕршыва «чечекленекен çĕршыв» тăвас тесе кăтартса панă задачăсене таттса парас ĕçре социализмлă ăмăртупа стахановла юхăм хăйсен аслă вырăнне йышăнса тăрĕç. Эпир большевикла ĕçлĕпĕр, эпир хамăрăн социализмлă аслă Тăван çĕршывăн ырлăхĕпе телейĕшĕн Сталин юлташ кăтартнă пек ĕçлĕпĕр.

(«Правда» хаçатăн ноябрĕн 17-мĕшĕнчи умстатьи).

## Парти Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ йышăннă решение пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле

Шупашкарпа Красноармейски районсен государствăна тырă памалли плана тахçанах тултарма пур майсем те пулнă. Анчах та çак майсемпе вĕсем усă курман, государствăна тырă парас ĕçе вăраха ярса пынă.

Ку ĕнтĕ пуринчен ытларах Шупашкар районне пырса тивет, мĕншĕн тесен вăл государствăна тырă парас ĕçе чăтма çук вăрах туса пырать. Ку районра сăмах пама, обязательствăсем илме иментсе тăмарĕç. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче кунта государствăна массăллăн тырă леçсе пама йышăнса, сентябрĕн юлашки пилĕк кунĕ хушшинче сахалтан та 700 тонна тырă леçсе пама пулнă. Çакăн пек йышăннине республикăри хаçатсенче те пичетлесе кăларнă, радио тăрăх та пĕлтернĕ. Анчах та ăна пурнăçа кĕртмен. Район октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма сăмах панă. Юлашкинчен, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ район руководителĕсене ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма хытă хушса хăварчĕ. Районра çак решение мĕнле пурнăçа кĕртсе пыраççĕ-ха? Пленум хыççăнхи вунă кун хушшинче государствăна тырă парас тĕлĕшпе Шупашкар районĕ пĕтĕмпе те 3,1 процент çеç ÿсĕм тунă. Район руководителĕсене пленум тырра колхозра ытларах тытса усрама хăтланакансене хирĕç татăклăн кĕрешме хытарса хăварчĕ пулин те, Шупашкар районĕнче государствăна тырă парас ĕçри саботажниксене хÿтĕлесе усраççĕ. Акă, нумай фактсенчен пĕри: Шăнкас ял Советĕнчи колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе чăтма çук юлса пыраççĕ. Райком бюровĕ унта райисполком председательне Миронов юлташа янă. Миронов юлташ колхоза пырса калаçкаласа пăхнă та «колхозсенче государствăна пама хатĕрлесе хунă тырă çук», тесе вывод туса хунă. Çав вăхăтра «Шăнкас» колхозра сушилкăна ватса пăрахнă, тырă типĕтме чарăннă, тырра пытарнă. Çакă ĕнтĕ государствăна тырă парас ĕçре тÿррĕнех саботаж туни пулмасть-и-ха? Миронов пек хăтланни саботажниксене хÿтĕлени пулмасть-и-ха? Юлса пыракан колхозсенче райком бюровăн ытти членĕсем те, вăл шутра Наркомзагăн районри уполномоченнăйĕ Ведин юлташ та темиçе хутчен те пулнă, анчах та авăн çапас, тырра типĕтсе тасатас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе вĕсенчен нихăшĕ те татăклă мерăсем йышăнман. Парти райкомĕн секретарĕ Караушев юлташ çав фактсемпе килĕшсе ларнă. ВКП(б) Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес ĕçе районри актива мобилизацилемен.

Ĕнер парти Обкомĕн бюровĕ Шупашкар районĕнче государствăна тырă парас ĕç мĕнле пынине сÿтсе-явса Миронова, вăл колхозра пулнă чухне саботажла ĕçсем тунине тăрă шыв çине кăларма мар, çавăн пек киревсĕр ĕçсене хÿтĕлесе пынăшăн,—райисполком председателĕнчен кăларма йышăнчĕ. Наркомзагăн районри уполномоченнăйне Ведина, государствăна тырă парас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăманшăн, бюро хытă ятларĕ. Парти райкомĕн секретарне Караушева та, XXIV-мĕш пленумăн решенине пурнăça кĕртсе пыма тимлĕн тăрăшманшăн, хытă ятларĕ. Караушевпа Ведин юлташсене бюро çапла асăрхаттарса хăварчĕ: государствăна тырă парас тĕлĕшпе районри лару-тăрăва кăтартса панă срокра тÿрлетмесен, вĕсем тĕлĕшпе татах та хытăрах мерăсем йышăнмалла пулать.

Çавăн пекех тата бюро Красноармейски район руководителĕсен ĕçне те хытă тишкерсе питлерĕ. Кунта колхозсем планран ирттерсе тырă парас тĕлĕшпе илнĕ хăйсен обязательствисене тултармаççĕ, ВКП(б) Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ йышăннă решение çитĕнĕксĕр пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Красноармейски район руководителĕсене бюро районăн государство умĕнчи парăмĕсене халех парса татмалла тăвас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

Республикăри районсен руководителĕсен парти Обкомĕн бюровĕ çакăн пек асăрхаттарнинчен тивĕçлĕ çыводсем тумалла. Обкомăн XXIV-мĕш пленумĕн решенине пăсма никама та ирĕк паман. Чăваш республикинчи пур колхозсем те ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татмалла.

## Казах ССР Верховный Совечĕн Президиумне Казах ССР Халăх Комиссарĕсен Советне Казахстанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетне

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Казахсен Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцие Казах республики 25 çул тултарнă ятпа саламлаççĕ.

Чĕрĕк ĕмĕр каялла казах халăхĕ, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, хăйĕн государствине туса хучĕ, напи тĕлĕшпе ирĕклĕн аталанса пымалли çул çине тăчĕ. Совет влаçĕ казах халăхĕ хушшинче пуçарулăх çуратса ÿстерчĕ. Казахстанри ĕççыннисене социализм тăвас ĕçе хутшăнтарчĕ, республикăн халăх хуçалăхне тата унăн культурине хăвăрт ÿстерсе пычĕ.

Иртнĕ 25 çул хушшинче Казах ССР-ĕнче малта тăракан промышленность туса хунă. Караганда шахтисем кашни çул темиçе миллион тонна çĕркăмрăк кăлараççĕ. Лениногорски тата Чимкентски свинец завочĕсем, Балхашски, Иртышски, Карсакпайски пăхăр шăратакан заводсем тата ыттисем те пирĕн çĕршыври халăх хуçалăхне тĕслĕ металл парса тăраççĕ. Казахстанри Семипалатинскра аш-какай комбиначĕ, Гурьевра пулăпа консервă комбиначĕ, Актюбинскра хими завочĕ туса лартнă тата ытти тĕрлĕ промышленность предприятийĕсем те чылай туса лартнă, нефть промышленноçĕ те ăнăçлăн аталанса пырать.

Колхоз йĕркипе ĕçлесе пурăнса, казах халăхĕ ялхуçалăхĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕ. Казахстанри социализмлă çĕрĕçĕ, кучухнехи машина техникипе хĕçпăшалланнăскер, тырă лайăх пулакан çеремлĕ темиçе çĕр пин гектар çĕре сухаласа акма пуçларĕ, вăл государствăна çулленех вуншар миллион пăт тырă парать. Республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те ăнăçлăн аталанса пырать.

Казах ССР-ĕнче социализмлă совет культури чечекленсе ÿссе кайрĕ. Унта революциччен халăхăн икĕ процентĕ çеç хут пĕлнĕ, хальхи вăхăтра унта 7.735 пуçламĕшпе вăтам шкул, 22 аслă шкул, Наукăсен академийĕ ĕçлесе тăраççĕ. Казах литературипе искусстви ăнăçлăн аталанса пыраççĕ. Напи интеллигенцийĕн йышлă кадрĕсем ÿссе çитĕнчĕç.

Совет влаçĕ казах хĕрарăмне чуралăхран кăларчĕ, ăна государство, хуçалăх тата культура строительствине активлăн хутшăнтарчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче казах халăхĕ Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хастарлăн хÿтĕлесе тăчĕ. Çапăçусенче хастарлă хпа паттăрлăх кăтартнăшăн вуншар пин казаха Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Казах республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци, хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçлесе, тăшмана çĕнтерме пулăшрĕç.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Казахсен Советлă Социализмлă Республикинчи ĕççыннисем Казахстанри халăхсене экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен малалла аталантармашкăн, хамăр аслă Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн малашне те ырми-канми ĕçлесе тăрĕç тесе çирĕп шанса тăраççĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ — Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Центральный Комитечĕ

## СССР Оборона Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

*1945 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕ — № 76 — Мускав хули*

**Юлташсем—артиллеристсемпе минометчиксем, инженерсемпе техниксем, совет артиллерийĕн офицерĕсемпе генералĕсем!**

**Паян совет çыннисем Хĕрлĕ Çарăн Артиллери кунне уявлаççĕ.**

**Отечественнăй аслă вăрçăра пирĕн мухтавлă артиллери Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне пурнăça кĕртрĕ.**

**Совет артиллерийĕ Отечественнăй аслă вăрçăн çапăçу хирĕсенче çитĕнсе Хĕрлĕ Çарăн хăватлă, пырса çапмалли тĕп вăйĕ пулса тăчĕ. Вăл пирĕн пехотăпа, танксемпе, авиаципе таччăн пĕтĕçсе çапăçса, хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе хăварчĕ. Фашистла Германипе Японие пĕтĕмпех аркатса тăкас ĕçре вăл питĕ паллă вырăн йышăнса тăчĕ.**

**Хĕвеланăçĕнчипе хĕвелтухăçĕнчи пур çапăçусенче те пирĕн мухтавлă артиллеристсемпе минометчиксем хăйсен паттăрлăхĕпе тăшманăн чĕрĕ вăйне, боевой техникине тата тĕреклетнĕ вырăнĕсене пĕтерсе тăкма пĕлнипе тăшманăн артиллерине çĕнтерсе чăннипех пуçпулса тăма тытăнчĕç, тăшманăн наступлени тумалли хатĕрĕсене—танкĕсемпе авиацине питĕ пысăк çухатусем кÿчĕç.**

**Совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçăн историне çав тери паха çĕнтерÿсем çырса хунă хăйĕн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсен тивĕçлĕ мухтавлăхĕпе хăюлăхĕшĕн мухтанать.**

**Фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ пулни, рабочисен, работницăсен, инженерсен, конструкторсен, техниксен, служащисен тата завод сен руководителĕсен ĕçри хастарлăхĕпе пуçарулăхĕ пирĕн артиллерие чи лайăх артиллери хĕçпăшалĕ тата кирлĕ таран боеприпассем парса тăма май пачĕ.**

**Юлташсем—артиллеристсемпе минометчиксем, инженерсемпе техниксем, совет артиллерийĕн офицерĕсемпе генералĕсем, артиллери тылĕнчи мĕнпур ĕççыннисем!**

**Сире, АРТИЛЛЕРИ КУНĔ ячĕпе салам латăп!**

**Хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ артиллеристсемпе минометчиксене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!**

**Отечественнăй аслă вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн артиллерийĕ татăклă ăнăçусем тунине палăртса хăварас тесе, ÇАПЛА ТУМА ХУШАТĂП:**

**Паян, ноябрĕн 18-мĕшĕнче, пирĕн Тăван çĕршывăн столицинче Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче тата Ленинград, Сталинград, Севастополь, Одесса, Хабаровск, Новосибирск, Свердловск, Горький, Молотов тата Тула хулисенче артиллериран çирĕм хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе хамăрăн мухтавлă артиллеристсене салют памалла.**

*СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Совет Союзĕн Маршалĕ А. ВАСИЛЕВСКИЙ.*



Ÿкерчĕк çинче: Шăхасан районĕнчи «Победа» колхозри кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăн бригадирĕ **М. Михайлова** юлташ. Вăл çак ĕçре 1941 çултанпа ĕçлет, кок-сагыз туса илмелли плана яланах ирттерсе тултарать. Михайлова юлташа лайăх ĕçленĕшĕн «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокпа наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

### ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРАССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ МĔНЛЕ ПЫНИ

(государство планне миçе процент тултарни)

(СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕн 1945 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйĕсем тăрăх)

| Районсем | Лашасем | Ĕне-выльăх | Сыснасем | Сурăхсемпе качакасем |
|---|---|---|---|---|
| Тăвай | 102,9 | 92,7 | 104,9 | 103,0 |
| Канаш | 102,5 | 92,4 | 109,7 | 116,9 |
| Красноармейски | 102,1 | 97,9 | 130,3 | 123,2 |
| Сĕнтĕр | 101,3 | 90,6 | 111,9 | 124,1 |
| Советски | 101,0 | 92,4 | 123,6 | 115,8 |
| Вăрмар | 100,9 | 97,4 | 123,9 | 115,7 |
| Элĕк | 100,9 | 90,4 | 116,2 | 120,6 |
| Куславкка | 100,8 | 92,6 | 112,9 | 110,6 |
| Шăхасан | 100,7 | 91,5 | 113,6 | 106,0 |
| Октябрьски | 100,6 | 90,5 | 110,1 | 106,9 |
| Чурачăк | 100,6 | 94,7 | 109,5 | 98,2 |
| Çĕрпÿ | 100,4 | 95,6 | 127,0 | 112,7 |
| Калинино | 100,2 | 90,2 | 120,0 | 110,9 |
| Йĕпреç | 100,1 | 93,3 | 104,7 | 118,9 |
| Муркаш | 99,4 | 87,9 | 119,8 | 98,8 |
| Вăрнар | 99,3 | 93,8 | 106,2 | 115,4 |
| Етĕрне | 98,8 | 93,0 | 108,5 | 116,0 |
| Ишлей | 98,4 | 92,6 | 117,3 | 120,6 |
| Сĕнтĕрвăрри | 97,4 | 97,8 | 108,0 | 106,8 |
| Чкаловски | 96,9 | 101,4 | 109,3 | 121,8 |
| Шупашкар | 96,1 | 98,1 | 107,6 | 106,9 |
| Елчĕк | 95,8 | 93,9 | 122,2 | 118,7 |
| Çĕмĕрле | 95,5 | 99,2 | 108,8 | 113,5 |
| Комсомольски | 93,5 | 95,0 | 106,3 | 102,7 |
| Хĕрлĕ Чутай | 93,3 | 100,5 | 110,4 | 129,3 |
| Шăмăршă | 92,5 | 93,5 | 103,6 | 123,3 |
| Первомайски | 91,9 | 100,1 | 91,4 | 119,8 |
| Кувакино | 91,1 | 89,9 | 94,3 | 98,1 |
| Пăрачкав | 90,4 | 96,0 | 112,5 | 109,9 |
| Улатăр | 89,7 | 95,7 | 78,6 | 98,4 |

### Ĕçшĕн хушса тÿлеççĕ

Красноармейски районри „Новый мир“ колхозра Ивановăпа Антипова юлташсем нумай вăхăт хушши колхоз сурăхĕсене пăхаççĕ. Хăйсене панă ĕçе вĕсем юратса тĕплĕн тăваççĕ. Сурăхсене таранттарас тата пăхас ĕçре зоотехниксемпе ветеринарсем хушнисене яланах пурнăçласа пыраççĕ.

Тăрăшса ĕçленине пула 1945 çулта хăйсен çумне çирĕплетсе панă 31 сурăхран Ивановăпа Антипова юлташсем 46 путек илсе, вĕсене пĕтĕмпех лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Çавăншăн колхоз правленийĕ вĕсене ĕçкунĕ çумне хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх кашнине 2-шер путек панă.

Ивановăпа Антипова юлташсем малалла та тăрăшса ĕçлеме сăмах панă.

З. ПОРФИРЬЕВ.

### Колхозниксем хăйсен ĕнисемпе ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. 1945 çулта чылай колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен ĕнисемпе колхоз ĕçне турĕç.

Акă, Кипечкасси ял Советĕнчи „Богатырь“ колхозра 62 çулхи А. Романов, çавăн пекех „Красный танк“ колхозри И. Малаев колхозниксем çу каçах колхоз хуçалăхĕнче тĕрлĕрен ĕçсенче хăйсен ĕнисемпе ĕçлерĕç. Вĕсем ĕнепе ĕçленипе кана 100-шер ĕçкунĕ ытла тунă.

Колхоз ĕçĕсенче вĕсем халĕ те хăйсен ĕнисемпе ĕçлеççĕ.

## Чăваш АССР Совнаркомĕнче

### АПАТ-СИМĔÇ КОМБИНАЧĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Республикăри апат-çимĕç комбиначĕсен октябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрьте Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Терешков юлташ, Горсовет исполкомĕн председателĕ Лукин юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Çав комбинат октябрьти производство планне пĕтĕм продукцин енĕпе 153,9 процент тултарнă.

Шупашкарти апат-çимĕç комбинатне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă тата ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме, вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма комбинатăн планран ирттерсе пухнă укçинчен 6.000 тенкĕ уйăрса памалла тунă.

### АЛТАЙРИ ВАГОНСЕМ ТĂВАКАН ЗАВОД ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

Алтайри вагонсем тăвакан завода Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче туса лартнă. Вăл халь тавар турттармалли вагонсем тума пуçланă. Халлĕхе 20 тонна тиекен 65 платформа туса хатĕрленĕ. (ТАСС)

### ФЕРМА ТУПĂШĔ

СОВЕТСКОЕ. Анна Корчакова 4 çул хушши Этменри «Красный пахарь» колхозри чăх-чĕп ферминче ĕçлет. Вăл тăрăшса ĕçленине пула кăçал кашни чăхран (пурĕ 55 чăх) 85-шер çăмарта, е планран ирттерсе 10-шер çăмарта илнĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх Корчаковăна çăмарта параççĕ. Вăл чăх-чĕп ĕрчетмелли плана та ирттерсе тултарнă.

## СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

ЕЛЧĔК. Районри партин пуçламĕш организацийĕсенче СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленес ĕç сарăлса пырать. Нумаях пулмасть ВКП(б) райкомĕ пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе агитколлектив руководителĕсен семинарне туса ирттерчĕ. Семинарта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Макаров юлташ агитаци ĕçĕн меточĕсем çинчен ăнлантарса пачĕ.

Хальхи вăхăт тĕлне партин 17 пуçламĕш организацийĕсенче суйлава хатĕрленесси çинчен ятарласа пухусем туса ирттернĕ. Районра 153 коммунист агитатор пулса ĕçлеççĕ.

„Марс“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Сабирзянов юлташ) 21 коммуниста тата 22 комсомольца агитатор пулса ĕçлеме уйăрнă. Вăл агитаторсене пилĕкшер килтен тăракан участоксем çумне çирĕплетнĕ. Колхозри вулав çуртĕнче суйлав литератури витринине туса хатĕрленĕ. Кашни каçах ĕç пĕтнĕ хыççăн вулав çуртне халăх пухăнать. Агитаторсем суйлав Положенине ăнлантарса параççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи парторганизаци те (секретарĕ Иванов юлташ) вулав çуртĕнче суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе ĕçе лайăх организацилерĕ. Вулав çуртĕн заведующийĕ Н. Емельянов юлташ, нумаях пулмасть партие кĕнĕскер, çамрăк суйлавçăсене пухса, вĕсене СССР Конституцийĕпе суйлав Положенине ăнлантарса парать.

Елчĕкри вăтам шкул çумĕнчи парти организацийĕ (секретарĕ Романов юлташ), „Пахарь“, „Трактор“ колхозсенчи колхозниксем хушшинче суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе ĕçлет. Парторганизацири 8 коммунист агитаци ĕçне туса пыраççĕ.

В. КРАСНОВ.

# СОВЕТ АРТИЛЛЕРИЙĔН УЯВĔ

**И. ПРОЧКО,**
**Артиллери генерал-лейтенанчĕ**

Отечественнăй аслă вăрçăн пур фрончĕсенче те артиллери çав тери пысăк боевой ĕçсем тунине ĕмĕрлĕхе палартса хăварас тесе, Артиллери кунне уявлама йышăнна. Кăçал çав куна Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхĕ историллĕ аслă çĕнтерӳ хыççăн уявлаççĕ. Кăçал пирĕн Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсемпе Япони империалисчĕсене аркатса тăкрĕ.

Артиллери кунне уявласси нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнипе питĕ таччăн çыхăнса тăрать. 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче Кăнтăр-Хĕвеланăç тата Дон фрончĕсенчи çарсем хăйсен паллă наступленине пуçласа ячĕç. Çав çапăçун малтанхи кунĕнчех совет артиллерийĕ ертсе пыракан вырăна йышăнчĕ те тăшманăн 22 дивизирен тăракан питĕ пысăк ушкăнне хупăрласа илсе пĕтерсе тăкиччен те çав вырăна çухатмарĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçăра нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатса тăкни улшăну тапхăрĕ пулчĕ. Хĕрлĕ Çар историллĕ аслă çĕнтерӳ турĕ. Совет çарĕсем хамăрăн Тăван çĕршыва ирĕке кăларчĕç, гитлеровецсем чуралантарнă çĕршывсенчи халăхсене фашизм çусмăрĕнчен ирĕке тухма пулăшрĕç, вăрçă ĕçĕсене тăшманăн çĕрĕ çине куçарса Çĕнтерӳ ялавне Берлин çине çĕклесе лартрĕç.

1945 çулхи август уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар, Верховный Главнокомандующин Совет Союзĕн Генералиссимусĕн Сталин юлташăн приказне пурнăçа кĕртсе, Манчжурире Японии çарĕсене аркатса тăкрĕ, империалистла Японии пĕр сăмахсăрах парăнассине хăвăртлатрĕ.

Нимĕçпе японец çарĕсене аркатса тăкас ĕçре совет артиллерийĕ питĕ паллă вырăн йышăнса тăчĕ. Вăрçăн пур тапхăрĕнче те вăл танксене хирĕç кĕрешмелли татăклă вăй пулса тăчĕ, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе боевой техникине пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пычĕ. Совет артиллерийĕ хăватлăн пырса çапнине Сталин юлташ пысăка хурса хакларĕ. „Çакă паллă,—терĕ Сталин юлташ:—артиллери вăл Ленинград патне тата Мускав патне пымалли вырăнсенче тăшмана малалла кайма чарма Хĕрлĕ Çара пулăшнă вăй пулнă. Артиллери вăл Хĕрлĕ Çара Сталинградпа Воронеж патĕнче, Курскпа Белгород патĕнче, Харьковпа Киев патĕнче, Витебскпа Бобруйск патĕнче, Ленинградпа Минск патĕнче, Яссыпа Кишинев патĕнче нимĕç çарĕсене аркатса тăкма пулăшнă вăй пулнă. Хăватла вут-çулăм тăкса, артиллери Отечественнăй вăрçăри чи хăватлă çапăçусенче пехотăпа танксене ăнăçлăн çул уçса пынă, çакна пула Хĕрлĕ Çар тăшмана пирĕн Тăван çĕршывран хăваласа кăларчĕ".

Çав тери пысăк ăнăçусем тунăшăн совет артиллерийĕн чи малтанах Сталин юлташа тав тумалла. Сталин юлташ кучухнехи вăрçăра артиллери мĕнле вырăн йышăнса тăмаллине, ăна мĕнле çулпа аталантарса пымаллине, çапăçу хирĕсенче артиллерипе хăш вăхăтра усă курни лайăхрах пулнине питĕ уçăмлăн кăтартса панă, артиллери чаçĕсемпе соединенийĕсен боевой ĕçĕсене куллен ертсе пынă. Сталин юлташ хальхи вăрçăсен характерне тĕрĕс ăнлантарса панă. Танксемпе авиаци çав тери вăйлăн пырса çапма пултарни артиллерие çапăçу хирĕнчен хĕссе кăларманнине, унăн çĕнĕ йышши тĕслĕхĕсене (хăй тĕллĕн çӳрекен, танксене хирĕç перекен, зенитнăй тупăсене) ĕçе кĕртсе пынине Сталин юлташ питĕ тĕплĕн каласа пана. „Артиллери вăл—вăрçă турри",—терĕ Сталин юлташ. Артиллерин пĕлтерĕшне çакăн пек каласа пани ĕнтĕ хăйĕн хăватлăхĕ тĕлĕшĕпе вăл пите вăйлă çар пулса тăнине пĕлтерет.

Партипе правительство артиллери промышленноçне аталантарас ĕç çине яланах тимлĕн пăхна. Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче çар заводĕсен йышне чылай ӳстерни, вĕсен хăватлăхне пысăклатнă, кучухнехи çĕнĕ йышши хĕçпăшал туса кăларма тытăннă. Пирĕн çĕршыври артиллери конструкторĕсене пирĕн çарпа çĕршыв лайăх пĕлсе тăрать. Вĕсем — Социализмла Ĕç Геройĕсем В. Г. Грабин, Ф. Ф. Петров, И. И. Иванов тата ыттисем те. Вĕсем пурте Сталинла шкулта вĕренсе çирĕпленнĕ. Сталин юлташ конструкторсене çĕнĕ йышши хĕçпăшал тăвас ыйтусене татса парас тĕлĕшпе ĕçлеме хавхалантарнă. Вăл пирĕн артиллери мĕнле çулйĕрпе аталанса пырассине, ун умне мĕнле задачăсем тухса тăрассине, çав задачăсене унăн мĕнле татса памаллине татăклăн кăтартса пана.

Анчах та конструкторсем пĕрпĕр йышши лайăх тупă проектне туса хатĕрленĕ хыççăн, туна çитĕнӳсемпе нихăçан та лăпланса ларман. Вăрçă вăхăтĕнче вĕсем Хĕрлĕ Çара тăтăшах çĕнĕрен те çĕнĕ тупăсем туса парас тесе тăрăшса ĕçлерĕç. Танксене хирĕç пемелли артиллерие çĕнетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем туна. Ăна аталантарассишĕн Сталин юлташ уйрăмах хыта тăрăшна. Вăрçă пуçланна вăхăтра, Сталин юлташăн приказĕ тăрăх, танксене хирĕç çапăçакан нумай полксем туна. Нимĕçсен танк дивизийĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре çав полксем уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăчĕç. Пирĕн тупă снарячĕсен шăтарса кĕрес пултарулăхне çĕнĕ йышши снарядсем, уйрăмăн илсен, броньăна çунтаракан снарядсем шухăшласа кăларни вăйлăлатрĕ. Нимĕçсен хăватлă çĕнĕ „тигрĕсем" те тата вĕсенчен те хăватлăрах „король тигрĕсем" те çав снарядсене тӳсме пултараймарĕç.

Пирĕн танксене хирĕç кĕрешмелли артиллери, çĕнĕ йышши тупăсемпе хĕçпăшалланнăскер тата хисепĕ енчен чылай ӳснĕскер, нимĕçсен танк дивизийĕсене питĕ вăйлăн пырса çапрĕ. 1941 çулта кĕркунне Мускав çывăхĕнче нимĕçсем 1.500 танк ытла çухатнă.

1943 çулта çулла Курск çывăхĕнчи çапăçусенче малтанхи виçĕ кун хушшинчех нимĕçсен 1.539 танкне пĕтерсе тăкнă. 1945 çулхи март уйăхĕнче Венгрире, Балатон кӳлли çывăхĕнче, нимĕç çарĕн 11 танк дивизине аркатса тăкнă. Вăрçă вăхăтĕнче çапăçу хирĕсенче нимĕçсен темиçе вунă пин танкне пĕтерсе тăкнă. Çака ĕнтĕ нимĕç çарĕ парăннин сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Пирĕн конструкторсемпе артиллери промышленноçĕ тăрăшса ĕçленине пула, хăй тĕллĕн çӳрекен вăйлă артиллерие çĕнĕрен туса хунă. Çакĕ ĕнтĕ пирĕн пехотăпа танксене наступлени туна чухне питĕ хăватлăн пулăшса пымалли вăй пулса тăчĕ. Тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене аркатса тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çара вăрçă вăхăтĕнче туса пана йывăр минометсем питĕ пысăк пулăшу пачĕç. Реактивла снарядсемпе пемелли боевой установкасемпе хĕçпăшалланнă гвардеецла миномет чаçĕсем Хĕрлĕ Çарпа совет çĕршывĕн мухтавлăхĕ пулса тăраççĕ. Чапа тухнă „катюшăсене" Хĕрлĕ Çар воинĕсем çав тери юратаççĕ, тăшман салтакĕсем вĕсенчен çав тери хăраççĕ.

Наступлени вăхăтĕнче артиллери тактикине улăштарас ыйтăва Сталин юлташ малтанах кăларса та ратна. Ĕлĕк наступление артиллери енчен хатĕрлес теня выранне артиллери наступленийĕ туса хуна. Кунта виçĕ тапхăр паларса тăрать: малтан артиллери атака тума хатĕрлет, унтан вăл атакăна пулăшса пырать, юлашкинчен вара тăшман оборонин шалти пайĕнче танксене пулăшса пырать. Çакна пула совет артиллерийĕ тăшмана татти-сыпписĕр персе тăрас тактикăна туса хучĕ.

Сталин юлташ кăтартса панипе тата вăл ертсе пынипе туна çак мероприятисем пурте çав тери паха результатсем пачĕç. Совет артиллерийĕ çапăçу хирĕнче тăшман артиллерине путарса ларгса пуçпулса тăма тытанчĕ, наступлени вăхăтĕнче вара вăл хăйĕн мĕнпур вут-хĕмĕ хăватне кăтартса пачĕ. 1943—1945 çулсенче Хĕрлĕ Çар туса ирттернĕ пур операцисенче те артиллери вăйлăн пулăшса пына. Кунта çакна аса илтерсен те çитĕ: Берлина тытса илессишĕн пулса иртнĕ çапăçусенче Хĕрлĕ Çарăн 22.000 тупăпа миномет пулнă.

Пирĕн артиллеристсем вырăс пушкарĕсен мухтавлă йăлисене таса тытса пычĕç. Вĕсем граждан вăрçи вăхăтĕнчи артиллеристсен çапăçури ăнăçăвĕсене чыслăн тӳрре кăларчĕç. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пына вăрçăра çав лайăх йăласене татах та йышлатнă. Совет артиллерисчĕсем ялан паттăр, хăюлла та ăста пулна. Артиллери офицерĕсем çапăçун чи кăткăс условийĕсенче те хăйсен подразделенийĕсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пына. Хĕрлĕ Çарти пур артиллеристсем те Отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче социализмла Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăннине, хамăрăн халăха çав тери хĕрӳллĕн юратнине, тăшмана çав тери курайманнине кăтартса пачĕç.

Вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар артиллерийĕ хисеп тĕлĕшĕнчен те пахалăх тĕлĕшĕнчен те чылай çитĕнчĕ. Унăн кадрĕсем кучухнехи вăрçăсен пысăк опычĕсене туянчĕç. Тăван çĕршывшăн çав тери мухтавла ĕçсем тунăшăн 1.200.000 артиллериста яхăн Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăлана. Красноармеецсене, сержантсене, офицерсемпе генералсене 1.600 çынна ытла Совет Союзĕн Геройĕн ятне пана.

* * *

Артиллери кунĕ вăл—пирĕн пĕтĕм çĕршывăн, пĕтĕм халăхăн уявĕ пулса тăрать. Совет çыннисем совет артиллерийĕпе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Унăн паттăр боецĕсене, офицерĕсемпе генералĕсене, ăна тăвакан талантлă конструкторсене ăшшăн асăнса сума сунаççĕ.

Совет артиллерисчĕсем, конструкторсемпе тата артиллери заводĕсенче ĕçлекен работниксемпе пĕрле, Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн историлле çĕнтерĕвĕпе хавхаланса, асла Сталин хавхалантарса пынипе çак хăйсен хăватлă хĕçпăшалне татах та лайăхлатса вăйлăлатас тесе, ывăнма пĕлмесĕр тăрăшĕç.

## США конгресĕнче Эттли сăмах тухса калани

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Англи премьер-министрĕ паян США конгресĕн икĕ палатин пĕрлешнĕ ларăвĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: эпĕ США президенчĕпе мирĕ мĕнле майпа лайăхрах сыхласа усрама май пурри çинчен «атом бомби енчен пăхса» калаçма пуçларăм, тенĕ.

Эттли Америка вăрçăра пысăк вăй хунине тата Англие пулăшнине питĕ мухтанă.

Англипе Америка хушшинчи çыхăнусем мĕн тери паха пулнине палăртса пама тăрăшса, Эттли çапла каланă: Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн системинче Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи хăйне уйрăм вырăн йышăнса тăрассине кĕтетĕп, тенĕ.

Эттли тата çапла каланă: Англире уйрăм предпринимательсене ĕçлеме ирĕк пур тата яланах пулĕ. Анчах та пысăк предприяти ытла та хăватлăланса кайсан монополиллĕ предприяти пулса тăрсан. лейбористсен правительстви çавăн пек предприятие уйрăм çынсен аллинче хăварни хăрушă пулма пултарать тесе шутлать.

Эттли çапла каланă: «Пурнăç шайне хăпартмашкăн пирĕнни пек промышленноçлă аслă çĕршывсен продукцийĕпе усă курма тĕнчере майсем нумай. Эпир, сирĕн пекех, экономика аталанса пырассине ĕненетпĕр; нуша çав тери пысăк чухне пирĕн пĕр-пĕринчен иртсе кайма тăрăшмалла мар», тенĕ.

Эттли малалла çапла каланă: хăйĕн шалти политикинче пирĕн правительство планра кăтартнă экономикăна туса хума тăрăшĕ, тенĕ.

## ТРУМЭН, ЭТТЛИ ТАТА МАККЕНЗИ КИНГ ПĔРЛЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: паян Вашингтонра Трумэн президентăн, Эттли премьер-министрăн тата Канада премьер-министрĕн Маккензи Кингăн пĕрле çырнă пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă, унта атом энергийĕпе усă курасси çинчен калаçнин итогĕсем çинчен каласа панă. Пĕлтерӳре çапла каланă: пĕрремĕшĕнчен, атом бомбине тумалли меслете никама та пĕлтермесĕр вăрттăн сыхласа усрамалла; иккĕмĕшĕнчен, Пĕрлешнĕ нацисен комиссине туса хумалла, çав комиссин çынсемпе яналасене пĕтерес ĕçре атом энергийĕпе усă курма май памалла мар тумалли тата çав энергипе промышленноçра тата этемшĕн усăллă ытти ĕçсенче усă курма пулăшмалли мерăсем хатĕрлемелле.

Çав комиссин çак тăватă пунктпа сĕнӳсем çырса хатĕрлемелле:

1) Мирлĕ тĕллевсене пурнăçа кĕртмешкĕн мĕнпур нацисем пĕр-пĕрне хăйсен наукăллă тĕп пĕлĕвĕсене каласа парас тĕлĕшпе.

2) Атом энергийĕпе мирлĕ ĕçре çеç усă курма пултăр тесе, ăна контроллесе тăрас тĕлĕшпе.

3) Атом бомбисене тата çавăн йышши ытти хĕçпăшалсене государствăсен хĕçпăшалĕсен шутĕнчен кăларса пăрахас тĕлĕшпе.

4) Çак йĕркесемпе ĕçлесе тăракан çĕршывсене—вăл йĕркесене пăснă пирки е вĕсене пурнăçа кĕртмен пирки сиксе тухакан хăрушлăхсенчен çителĕклĕ хӳтĕлес тĕлĕшпе

## Торезпа де Голль пĕр-пĕрин патне çырусем янă

ПАРИЖ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: ĕнер каçхине правительство канцелярийĕ коммунистсен партийĕн секретарĕ Морис Торез Францин çĕнĕ правительствине туса хурас ыйту пирки де Голль генерал патне çыру яни çинчен пĕлтернĕ. Çав пĕлтерӳре Торез çырăвĕпе де Голль генералăн ответне пичетленĕ.

Торез çырăвĕнче çапла каланă: «Француз халăхĕ правительствăна наци майлашса тăнă евĕрлĕ тăвассине, ăна тăшмана хирĕç кĕрешнĕ советăн программине пурнăçа кĕртмешкĕн тăвассине кĕтет». Коммунистсем ответлăха хăйсем çине илме тата правительствăна кĕме хатĕр. Учредительнăй пуху пĕр саслăн йышăннă тăрăх, çав правительствăна тума Сире хушнă. Эпир министрсен вырăнĕсене тĕрĕс валеçме кирли çинчен каларăмăр. Эпир пирĕн представителе çак виçĕ министвăран пĕрне ертсе пыма хушма ыйтрăмăр: шалти ĕçсен министерствине, е ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине, е çар министерствине. Паян ирхине пĕрле калаçнă чухне Эсир мана çапла каларăр: çав асăннă министерствăсенчен хăшне те пулин ертсе пыма Сирĕн парти членне хушма пултараймастăп, терĕр, Эсир пирĕн партин нациллĕ характерне тата вăл тытса пыракан политикăна пăсакан сăлтавсем илсе кăтартрăр. Эпир Сирĕн çав сăлтавăрсене йышăнма пултараймастпăр, вĕсем пирĕн француз тивĕçне кӳрентереççĕ. Эсир Франци ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вилнĕ темиçе пин коммунистăн таса ятне çав тери хытă кӳрентеретĕр. Çавăнпа эпир коммунистсене правительствăна кĕртес тĕлĕшпе кăларса тăратнă хамăрăн условисене пурнăçламаллах тесе калатпăр».

Де Голль генерал хăйĕн ответĕнче çапла каланă: «Эпĕ сирĕн ноябрĕн 15-мĕшĕнче çырнă çырăвăра тин çеç вуласа тухрăм. Эпĕ пирĕн паянхи калаçу, эпир Францин тулашри политики çинчен тата çав политика çине коммунистсен партийĕ мĕнле пăхни çинчен калаçни Францишĕн çапăçса вилнĕ французсен ятне кӳрентерме пултарать тесе ниепле те шухăшлама пултараймастăп. Пирĕн çĕршыв правительствăна часрах туса хума ыйтать. Учредительнăй пуху çав правительствăна туса хума мана хушрĕ. Эпĕ коммунистсен партине правительствăна анлăн хутшăнма сĕнтĕм, анчах та эпĕ правительствăна хам тăватăп, терĕм, министерсен вырăнĕсене хам валеçетĕп, терĕм. Мана хăвăрăн татăклă ответăра пĕлтерме ыйтатăп».

Морис Торез хăйĕн иккĕмĕш çырăвĕнче де Голль генерала çапла пĕлтернĕ: «Эпĕ коммунистсем ответлăха хăйсем çине илесшĕн пулнине тата вĕсем правительствăна хутшăнасшăн пулнине тепĕр хут çирĕплетсе паратăп. Учредительнăй пуху çав правительствăна часрах туса хума тата ăна наци евĕрлĕ, халăхăн пурте сасăланă вăхăтра палăртнă ирĕкĕ тăрăх туса хума сĕнет. Коммунистсен партийĕ хăйĕн француз халăхĕ умĕнчи ответлăхне туйса тăрса, хăйĕн правительствăна кĕмелли условийĕсене тепĕр хут çирĕплетсе парать, урăхла каласан, вăл министрсен вырăнĕсене тĕрĕс валеçтерĕсшĕн тата пирĕн представителе çак виçĕ министерствăран пĕрне—шалти ĕçсен министерствине, е ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине, е çар министерствине—ертсе пыма хуштарасшăн».

## ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУМА КИЛĔШМЕН

ПАРИЖ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: Нациллĕ Учредительнăй пухăвăн председателĕ Феликс Гуэн ноябрĕн 16-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра де Голль генералтан çыру илнĕ. Де Голль генерал çав çырура çапла каланă: Учредительнăй пуху мана Франци правительствине туса хума хушнине эпĕ ăна каялла тавăрса паратăп, тенĕ.

Феликс Гуэн çийĕнчех политикăллă ушкăнсен лидерĕсене пухнă та вĕсене де Голль çырăвне вуласа панă. Çакăн хыççăн пурте пĕрсаслăн çапла йышăннă:

Пĕрремĕшĕнчен, çак çырăва ноябрĕн 17-мĕшĕнче Учредительнăй пухăвăн пур членĕсене те вуласа памалла, унтан Феликс Гуэнăн отвечĕпе пĕрле хаçатсенче пичетлесе кăлармалла; иккĕмĕшĕнчен, тунтикун, ноябрĕн 19-мĕшĕнче, 15 сехетре кун йĕркипе йышăнма Учредительнăй пухăвăн усă ларăвне пухмалла.

Çĕнĕ правительство тăвиччен куллен хи ĕçсене вăхăтлăх правительствăн туса тăмалла.

Политикăллă ушкăнсен лидерĕсен пухăвĕнче Венсан Орголь, Авинэн, Жак Дюкла, Эдуард Эррио, Даниель тата Морис Шуман пулнă.

## ФРАНЦИРЕ ТĂШМАНА ХИРĔÇ КĔРЕШЕКЕН НАЦИ СОВЕТНЕ СЫХЛАСА ХĂВАРМА ЫЙТНИ

ПАРИЖ, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 16-мĕшĕнче Францире тăшмана хирĕç кĕрешекен наци совечĕн ларăвĕ пулать. Çав ларура наци совечĕн малашнехи кунçулĕ çинчен сӳтсе-яваççĕ. Обществăллă тата политикăллă питĕ пысăк темиçе организаци, çав шутра ĕç конфедерацийĕ, коммунистсен партийĕ тата «Фрон насьональ», тăшмана хирĕç кĕрешекен наци советне сыхласа хăварма йышăннă, мĕншĕн тесен унăн Францире улшăнусем тăвас тĕлĕшпе нимĕç оккупацийĕ вăхăтĕнче çырса хатĕрленĕ программипе пурнăçа кĕртмен-ха.

## СУРАБАЙĂРИ ÇАПĂÇУСЕМ

САН-ФРАНЦИСКО, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио Интернейшел Ньюс Сервис агентстви пĕлтернине парать. Çав пĕлтерӳре каланă тăрăх, Сурабайăра вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Индонезиецсем вăрçă вăхăтĕнче чавнă траншейăсене кĕрсе ларнă. Ассошиэйтед Пресс агентствин юлашки пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, индонезиецсем Сурабайăна пыракан чугун çула хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Британи çарĕсем 5 кун хушшинче пысăк мар çитĕнӳсем çеç тунă. Анчах та вĕсем Сурабайăна артиллерирен пемесĕрех тытса илме шутлаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ ноябрĕн 14-мĕшĕнче Сурабайăран пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Инди çарĕсем 100 индонезиеца ытла вĕлернĕ, хулара индонезиецсен виçĕ хаяр контратакине сирсе янă. Англи çарĕсен çын сахал пĕтнĕ. Сурабайăра индонезиецсем голландецсен вăрçă умĕн бетонран тунă тĕреклетнĕ вырăнĕсене йышăннă та, Англипе Инди çарĕсен артиллерийĕ йышлăрах пулсан та, вĕсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

## ÇĔНĔ ЗЕЛАНДИРИ ĔÇ ФЕДЕРАЦИЙĔ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН ФЕДЕРАЦИНЕ КĔРЕТ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Веллингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çĕнĕ Зеландири ĕç федерацийĕ Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине кĕме йышăннă.

Çĕнĕ Зеландири ĕç федерецийĕ тата çакăн пек резолюци йышăннă: пирĕн правительствăн Англи правительствинчен Индонезири ĕçсем çинчен тĕплĕн каласа пама ыйтмалла, кирлĕ пулсан—индонезиецсем никама пăхăнмасăр хăйсен ирĕкĕпе пурăнма законлă тăрăшнине пусарса лартас ĕçре Англин хĕçпăшаллă вăйĕсемпе усă курма памалла мар тума сĕнмелле. Резолюцире тата правительствăран индонезиецсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Японии вăйĕсемпе мĕнле те пулин усă курнине хирĕç протестлеме ыйтнă.

## ДАХАУРИ ГИТЛЕРЛА КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРЬТИ ПАЛАЧСЕНЕ СУД ТУМА ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: ĕнер Германин Америка оккупациленĕ пайĕнче Дахаури гитлерла концентрациллĕ лагерьти 40 палача суд тума пуçланă. Айăпланакансен вырăнĕнче концентрациллĕ лагерьти врачсем Шиллингпа Хинтенмейер, лагерь начальникĕ Эйхендорф тата ыттисем те лараççĕ. Шиллинг врача опытсем туса темиçе çĕр çынна вĕлернĕшĕн, Эйхендорфа—лагере хупнă еврейсене вĕлернĕшĕн айăплаççĕ. Судра айăплакан Америка подполковникĕ çапла каланă: çав лагере хупнă çынсемпе—опыт тăвакан кроликсем вырăнне усă курнă, тенĕ.

Свидетель Америка врачĕ. Дахау хулине апрелĕн 30-мĕшĕнче, урăхла каласан, çав хулана ирĕке кăларсан тепĕр кунне пынăскер, суда крематорире нумай çын виллине тупни çинчен каласа панă. Çав çынсем хушшинче вăл вĕри чирпе чирлесе вилнĕ 200—300 çынна курнă.

Тепĕр свидетель çапла каласа панă: Дахау лагерĕнче 800 çын вырнаçмалăх бараксене 1.500—2.000 çын вырнаçтарнă. Ирĕке кăларнă вăхăтра çавăнта хупнă çынсенчен нумайĕшĕ питĕ начар пулнă, баракран тухма та пултарайман.

## ВЕНГРИРИ ФАШИСТЛА ПРЕСТУПНИКА ИМРЕДИЕ СУД ТУНИ

БУДАПЕШТ, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Будапештри халăх судĕнче вăрçă преступникĕн—Венгри премьер-министрĕ пулнă Имреди Беланăн ĕçне пăхса тухма пуçланă.

Айăпласа çырнине вуласа панă хыççăн Имредирен ыйтса тĕпчеме пуçланă. Ыйтса тĕпченĕ чухне Имредие тĕрĕс айăплани тата çак Венгри Квислингĕн ĕçĕ преступникла ĕç пулни лайăх паларнă. Имреди вăл государствăна хĕçпăшаллантармалли фашистла программăна çырса хатĕрленĕ, çав программăна «хĕçпăшаллантармалли пилĕк çуллăх план» тесе ят панă. Çав план тăрăх çар нушисем валли Венгри экономикинчен тата халăх бюджетĕнчен 1 миллиард пэнкэ укçа сăптарса илмелле пулнă. Çав вăхăтра Имреди финанс министрĕ пулса ĕçленĕ. Каярахпа, 1939 çул пуçламăшĕнче, хăй премьер-министр пулса ĕçленĕ вăхăтра, Имреди Венгрие тĕнĕл держависен договорне йышăнтарнă. Çав тапхăрта Имреди хăйĕн хуçисем патĕнче—Гитлерпа Муссолини патĕнче—икĕ хутчен пулнă.

Имреди Венгрире нимĕçсен позицине çирĕплетме пур майсемпе те пулăшнă. Вăл пулăшнипе ĕнтĕ Венгрири нимĕçсен фашистла организацине «Фольксбунда» ĕçлеме ирĕк панă. Судья çапла каланă: халь паллă пулнă тăрăх, ун чухне Имредие премьер туса хума нимĕçсем питĕ хыт тăрăшнă, тенĕ.

## ОСЛО ХУЛИНЧЕ КВИСЛИНГ «МИНИСТРĔСЕНЕ» СУД ТĂВАÇÇĔ

ОСЛО, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Квислинг «министрĕсене» суд тума пуçланă. Чи малтан Станг тата Иргенс «министрсене» суд тăваççĕ. Тепĕр эрнерен Хагелинпа Фуглесанга суд тума пуçлаççĕ, декабрь уйăхĕн варринче Хустада суд тăваççĕ.

## Ялсенчи художествăллă пултарулăх смотрне лайăх хатĕрленсе ирттерер

Тăван республикăн чĕрĕк ĕмĕрĕнче чăваш халăхĕн творчестви те нумай ӳсрĕ. Халăх творчествине сцена çине кăларасси ялти художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçне, колхозниксен, колхозницăсен, служащисемпе килхуçи хĕрарăмĕсен пултарулăхне палăртасси пирĕн паха ĕç пулса тăчĕ. Ялсенчи кружоксем яланах ĕçлекен творчествăллă коллективсем пулса тăчĕç. Вĕсен идейăллă тата художествăллă пахалăхĕ ӳсрĕ, репертуарĕ те урăхланса çĕнелчĕ. Эпир, аслă вырăс халăхĕн вăйлă искусстви хыççăн кайса, совет гражданĕсен патриотизмне, Хĕрлĕ Çарăн героизмне, çĕнтерӳсен симфонине сценăсем çинче курма пуçларăмăр.

Художествăллă пултарулăх коллективĕсен творчествине татах та анлăрах сарса ярас, вĕсен репертуарне лайăхлатас тата халăх хушшинчи талантсене тивĕçлипе палăртса, вĕсене ӳсме çул уçса парас тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ, ВЛКСМ Обкомĕ тата Политпросвет учрежденийĕсен управленийĕ кăçал ялти художествăллă пултарулăх кружокĕсен смотрне ирттерет. Смотр 1945 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче 1946 çулхи мартăн 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртет.

Смотра хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе республикăра ятарласа комисси уйăрнă, смотрăн Положенине çирĕплетнĕ. Положени тăрăх, октябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 1-мĕшĕ хушшинче колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче, шкулсемпе ача-пăча клубĕсенче хатĕрленӳ ĕçĕсем пулса пымалла. Пуринчен ытла çак хушăра чăваш халăхĕн юррисемпе ташшисене, аслă вырăс халăхĕн хăватлă художествăллă творчествине кăтартакан произведенисене, драмăпа халăх инструменчĕсен коллективĕсене суйласа илмелле, уйрăм ташăçисене, юрăçисене, тĕрлĕ инструментсем калакансене, юмахçăсене палăртма тăрăшмалла. Ялти смотрсем январĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче пулса иртĕççĕ. Ку ĕçре ялти интеллигенцин, партипе комсомолăн тата ялти активистсен вăйĕпе анлăн усă курса, художествăллă пултарулăх коллективĕсем валли пур условисене те туса памалла. Паллах, çак кампание ирттерес ĕçре ял Совет исполкомĕсемпе колхоз правленийĕсем те аякра тăма пултараймаççĕ. Вĕсен асăннă кружоксене ĕçлеме çурт, вутă, çутă, кирлĕ пек инструментсем тупса парас тĕлĕшпе куллен пулăшса пымалла.

Октябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа республикăри ял Совет тата район Совечĕн исполкомĕсен çумĕнче смотра ирттерес тĕлĕшпе ятарласа уйăрнă комиссисем ĕçлемелле. Вăл комиссисене исполком председателĕсем ертсе пымалла, ку ыйтăва районсемпе ял Совет ларăвĕсенче тĕплĕн сӳтсе-явса татăклă решенисем йышăнмалла, вĕсене пурнăçа кĕртсе пыма тытăнмалла. Калас пулать, ку тĕлĕшпе нумай районсенче халĕ те нимĕн те тумаççĕ-ха.

Положени тăрăх, ноябрĕн малтанхи кунĕсенче пур районсенче те ялсенчи смотр ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕсен 1—2 кунлăх семинарĕсене ирттермелле. Семинара вулав çурчĕсемпе клубсен заведующийĕсене, кружок руководителĕсене чĕнмелле, вĕсене смотра ирттерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ канашсем памалла. Çакна вара халех, çак кунсенчех тума тытăнмалла.

Халиччен ирттернĕ смотрсен итогĕсем пире ку енĕпе лайăхрах та активлăрах ĕçлеме вĕрентеççĕ. Пуринчен ытла халăхпа ĕçлеме, актива явăçтарма тата талантсене суйласа илме пĕлни кирлĕ. Çак ĕçре смотр комиссийĕсене ялти учительсем питĕ пысăк пулăшу парĕç.

Художествăллă пултарулăх кружокĕсен репертуарне юлашки çулсенче халăх фольклорĕ—юмахсемпе халлапсем, такмаксем анлăн кĕре пуçларĕç. Шкул ачисемпе колхозниксем пире çав тĕри паха, шухăш тĕлĕшпе çирĕп халлапсем каласа пама пултараççĕ. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнче вĕренекенсем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче халăх хушшинче 6000 йĕркĕ ытла юрăсемпĕ такмаксем, 200 халлап-юмах пухнă. Вĕсенчĕн нумайĕшне Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕ йышăннă. Вĕсемех халăх тĕррисемпе чĕнтĕрĕсене (шăтăклисене) пухас енĕпе те сахал мар ĕçленĕ.

Паллах, çак пархатарлă ĕçе пур çĕрте те тума пултараççĕ, тумалла та.

Çакна та калас пулать, художник-самоучкăсене палăртас енĕпе те вырăнсенче тивĕçлипе ĕçлемеççĕ-ха. Районсенчи комиссисен вара ку ыйтăва çине тăрсах хускатмалла. Районсенчи смотрсем 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕпе мартăн 5-мĕшĕ, республикăра — мартăн 5-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулмалла. Унчен район центрĕнчи культура çурчĕсене пур енчен те хатĕрлесе çитермелле. Вĕсене илемлетмелле, культурăллă тумалла. Халĕ вĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Вĕсен хуçалăхĕ япăхнă, масса хушшинче ĕçлессине манăçа хăварнă культура çурчĕсем те çаплах пур-ха.

Районсенчи хаçатсенче смотр çинчен тăтăшах çутатса пырас пулать. Хаçат страницисенче тин çеç çырма пуçăнакан сăвăçсене, такмакçăсене, литература кружокĕсене вырăн памалла.

Халиччен ĕçри опытсем тăрăх, смотра, ирттерес лайăх произведенисемпе коллективсен творчествисене анлăн сарас енĕпе радиоузелсем питĕх те пысăк вăй пулса тăраççĕ. Лайăх коллективсене микрофон умне кăлармалла, вĕсем хăйсен ĕçĕнчи паха опыта сарма пултараççĕ.

Смотра лайăх хатĕрленсе пысăк çĕкленӳпе ирттересси партипе совет работникĕсен, обществăллă организацисен, совет гражданĕсен паха тивĕçĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыв халĕ пысăк событисен вăхăтĕнче пурăнать. Çĕршывăн пур кĕтессисенче те СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ. Суйлав кунĕ—пирĕн ĕççыннисемшĕн пысăк уяв. Художествăллă пултарулăх кружокĕсен смотрĕ шăпах çак тапхăрпа пĕр вăхăтра пулса пырать. Çакă вăл пирĕн умма татах та пысăкрах задачăсем кăларса тăратать. Смотра хатĕрленсе пынă май, асăннă коллективсен суйлавçăсем хушшинче агитмассăллă ĕçсене тума та пĕлмелле, хăйсен концерчĕсемпе, выступленийĕсемпе партипе совет органĕсене политмассăллă ĕçе туса пыма пулăшмалла.

**В. РЖАНОВ.**

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-37, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельхорсен пайĕн—0-67, издательство конторин—0-23.

НТ 00453 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.